С(4УВ)
Г68
314894УВ

Петюк па

Денис Гордеев

Малатук

Национальная библиотека ЧР
4-031489

ВОЗВРАТИТЕ КНИГУ НЕ ПОЗЖЕ
обозначенного здесь срока

КОНТРОЛЬНЫЙ ЭКЗЕМПЛЯР

Денис Гордеев

с(чув)
Г68

Петюкпа Малатук

сăвăсем

Шупашкар
Чăваш кĕнеке
издательстви

1989

Обязат. экз.

ББК 84. Чув 7—5
Г 67

ТУПМАЛЛИ

ПĂРАВУС 3
ТĔЛĔНТЕРМĔШ 4
АМĂШ ЮМАХĔ 5
МАРИНЕ АМĂШĔ 6
ХĔЛЛЕХИ КУН 7
АЛЕНУШКА ТЕТТИСЕМ 8
ВАНЮКПА АСЛАШШĔ 10
ШАЛКĂМ ÇУМĂР 11
РАКЕТА 12
ИРХИНЕ 13
ЮНТАРМĂШ 14
ВĔЛТĔРЕН 16
ШАР ПЕК УЙĂХ 17
МĂШĂР ШĂНКĂРЧ 18
ПУЛĂРА 19
ПЕТЮКПА МАЛАТУК 20
ПĔЧĔК ХУДОЖНИК 22
ТЫТСА ЮРАТ 23
СУЯ ПАТТĂР 24

31489 чуб
Чувашская Республиканская БИБЛИОТЕКА им. М. Горького
ПРОВЕРЕНО 2010

Г 4803010200—059 / М 136(03)—89 82—89
ISBN 5-7670-0191-X

Пăравус

Пукан çумне пукан —
Ку ĕнтĕ пăравус.
Петюк — руль тытакан.
Асту, пуçна ан ус!

Хаваслă машинист
Пăхать инçе-инçе.
Ванюш, мĕскершĕн эс
Йĕретĕн айккинче?

Йĕме сăлтав çук мар.
Руль тивĕçмест ăна.
Калать вăл Петюка:
— Вылясшăн ху кăна...

Ванюш халь руль тытать.
Асту, пуçна ан ус!
Епле, ав, ыткăнать
Хăватлă пăравус!

— Ванюш, çитет-тĕр. Чар!
Часрах ан, эп ларам.
Ванюш анасшăн мар,
Петюк тĕртсе ярать.

Хӳхлеççĕ иккĕн тан.
Симун пичче кулать:
— Татах тӳнтер пукан —
Ик пăравус пулать.

Тĕлĕнтермĕш

Пирĕн вăйă кулăшла.
Тĕлĕнтермĕш пит нумай.
Йытă ташлать чăвашла
Купăсне каланă май.

Ик уран çӳрет така.
Шăхличне калать ĕне.
Кролик ватă кушака
Сунара пыма чĕнет.

Слон йăваннă месерле,
Кăчи-мачи хуçкалать.
Вĕрлĕк тăрăх вĕçесле
Бегемот, ав, куçкалать.

Пулă сĕтĕрнĕ çуна,
Лашана ярăнтарать.
Тилĕ тупнă та çунат
Çерçирен вĕçсе тарать.

Ним те пăтратман, туссем,
Эпĕ çыртăм йĕркипех...
Пулмĕç вăйă йĕркисем
Пурнăçра чăн пулнă пек.

амăш юмахĕ

Шавлама пăрахрĕ Сантăр,
Ларас терĕ шăпăртах.
Ват аслашшĕ лăпкăн кантăр —
Тĕлĕресшĕн вăл пăртак.

Шăплăх йăлăхтарчĕ хăвăрт.
Мĕн туса йăпанмалла?
Мультфильмсем курмашкăн вăхăт
Çитеймен — тăхтамалла.

Ларчĕ-ларчĕ те вăл тупрĕ
Йăпанмалăх ĕç тинех.
Виçĕ хут та сирсе тухрĕ
Юмахсен кĕнекине.

Вулама пĕлмест-ха Сантăр,
Саспалли кăна паллать.
Вулаймарĕ тем тусан та
Кĕнеке ятне çаплах.

Систермесĕр çеç, вăраххăн
Пычĕ амăш ун патне:
— Хăш юмахĕ лайăхрах-ха?
— Эс калаканни, анне.

Маринепе амăшĕ

Йăлăхтарчĕç — тĕртрĕ ячĕ
Марине теттисене.
Амăш тĕпелте ларатчĕ —
Чупрĕ пычĕ ун патне.

— Мĕн тăван?
— Чăлха çыхатăп,
Сан валли вăл, ăшăскер.
— Кӳр-ха, эп çыхса пăхатăп,
Кӳр-ха, кӳр, — тет пĕчĕкскер.

— Пултарайăн-ши эс? Темĕн...
Пуçтарах теттӳсене.—
Амăшне итленĕçемĕн
Тута тăсрĕ Марине.

Пĕчĕкскер тĕрлесшĕн тĕрĕ,
Вĕренесшĕн вăл çыхма.
Пултарать те пулĕ хĕрĕ,
Амăш çеç хăрать шанма.

ХЁЛЛЕХИ КУН

Кам кăна-ши хăвалать-тĕр
Йышлă юр пĕрчисене?
Кунĕпех тытма эп хатĕр —
Кантăкран шаккать анне.

— Аллуна шăнтан, ачашăм,
Кĕр часрах, выля пӳртре.—
Эп кĕрсен, мана ачашшăн
Çупăрлать анне питрен.

Чи юратнă теттесем те
Илĕртмеççĕ выляма.
Ашăнман-ха пӳрнесем те:
— Эп тухам-и урама?

Юриех сывлатăп ассăн:
— Ну, аннеçĕм, килĕшсем.
— Кăшт тăхта.
— Халь тухмасассăн,
Тарса пĕтĕç лĕпĕшсем.

Аленушка теттисем

Хушка пуç кушак, путек,
Сар кĕпеллĕ пукане—
Харăс темиçе тетте
Хучĕ вăл сĕтел çине.

Итлемеççĕ теттесем.
Кушак ӳкрĕ урайне.
—Эп сана, Мăр-мăр!—тесе
Вăл кăнтарчĕ пӳрнине.

Пукане çыхасшăн мар
Сар çеçкеллĕ тутăрне.
—Пултаратăн вĕт шăнма,—
Тет Аленка теттине.

Упине, çăмламасне,
Ташлама хушать вĕçрен.
Леш силлет вара пуçне
Пружинсем пушаниччен.

Попугай, кăвак сăмса,
Аптратать Аленкăна.
Ни тăмасть вăл çакăнса,
Йăваннма пĕлет кăна.

—Лар кунта!—пукан çине
Хучĕ вăрăм сăмсана.
Попугай теттесене
Тӳнтерет, персе анать.

— Ан пăс эс хитре вăййа,—
Тет Аленка вĕрентсе.
Ашкăнчăк попугая
Тăратать вăл кĕтесе.

Ванюкпа аслашшĕ

Сукмакпа пыраççĕ
Ванюкпа аслашшĕ.
Çăрăлать хура çĕр,
Ӳрасем шăвасшăн.

— Тупса пар-ха, тусăм,
Пĕр патак,— тет ватă,
— Çул шуçлак, эп унсăр
Шанчăксăр утатăп.

— Шăвасран хăран-тăк,
Аллуна кӳр эсĕ.
Çирĕпрех таян та,—
Эпĕ ӳкерместĕп.

Шалкăм çумăр

Çумăр, çумăр,
Ăшă çумăр!
Ăш тумламлăскер, килех!
Çуртсем çумĕн
Эпир пурте
Халь васкатпăр килелле.

Çумăр, çумăр,
Ăшă çумăр!
Шӳтеретĕн чĕресрен.
Йĕпенет пулин те
Тумăм,
Чупрăм тухрăм
Хӳтлĕхрен.

Ӳплештернӗ ик витре,
Айлӑн-çийлӗн хунӑ.
Ку ракета. Пӗкӗрен
Унӑн рульне тунӑ.

Чупкалаççӗ тавралла
Иккӗн-виççӗн харӑс.
Кӗç ракета каймалла:
Пурте хӑвӑрт ларчӗç.

Çӗкленмешкӗн, кӑшкӑрса,
Коля ирӗк пачӗ.
Ачасем, ав, хӑраса
Куççене хупаççӗ.

Ӳсчӗр-ха айванскерсем,
Космоса çӗкленӗç.
Халӗ куç хупакансем
Ун чухне шикленмӗç.

Ирхине

Сар хĕвел çӳле çĕкленнĕ.
Тăнă амăш паçăрах.
Хĕрĕ пуç урлах пĕркеннĕ
Тутлă ыйхă тарасран.

— Света хĕрĕм, вăхăт çитрĕ,
Тăр та, садике каяр.
Амăш сассине вăл илтрĕ —
Куçĕ уçăласшăн мар.

Пит çинчи кулли хаваслăн
Сывлăх сунчĕ амăшне.
Çывăхрах автан уç саслăн
Тăсрĕ хăй куккарекне.

Ах, тухас килмест пĕрре те
Аш вителĕк айĕнчен.
— Эп, анне, кăшт тĕлĕрем-и,
Эсĕ чей вĕретиччен?

— Куккареку! Эп вăраннă.
Кам тăман вырăн çинчен!
Эсĕ те тăхта, автанăм,
Кухньăра чей вĕриччен...

Юнтармăш

Сар хĕвел ачасене
Ăшшăн-ăшшăн илĕртет.
Урама çерем çине
Вылямашкăн килĕр, тет.

Ак Антун çерем çинче.
Унăн теттесем нумай.
— Манăн! — кăшкăрать çинçен
Калаçса выляни май.

Ыйт унран:
— Лаша парсам
Выляма вăхăтлăха.
— Çĕмрĕк урапу пур сан,—
Тет, ямасть вăл çывăха.

— Эп вылям-и упупа?
Халлĕхе пӳртсем эс ту.
— Манăн! Хам выляп унпа! —
Кăшкăрать каллех Антун.

— Эй, вылятăр пĕчченех,—
Терĕç пурте ачасем.
Антун ларчĕ темчченех,
Йăлăхтарчĕç теттесем.

— Кил кунта! — чĕнет мана.
Эпĕ ал сулап кăна.
Явăçасчĕ ушкăна —
Унран пурте пăрăнать.

Макăрса ярать Антун,
Куҫҫульпе питне çăвать.
— Ӳлĕмрен апла ан ту,—
Амăш юнаса калать.

Вĕлтĕрен

Тĕп урам,
Сукмак хĕрри.
Ӳссе ларнă вĕлтĕрен.
Урампа иртен пĕри
Пăрăнать çак сĕмсĕртен.

Чĕннĕнех
«Туслаш манпа!»
Тайăлать вăл,
Çил вĕрсен.
Кам туслаштăр-ха унпа?
Чĕпĕтет хăй,
Вĕлтĕрен.

шар пек уйăх

Ашă каçсенче хĕрне
Ашшĕ уçăлма чĕнет.
— Мĕн ку? Ку мĕн? Ку тата? —
Аптратать хĕрĕ, ыйтать.
Хурăн хыçĕпе шуса
Тухрĕ уйăх тăп тулса.
— Пысăк шар! Атте, хăçан
Кун пек шар илсе паран?
Ай, епле хитре ку шар!
— Чĕппĕм, уйăх ку, шар мар.
— Уйăх? Уйăх та нихçан
Эс мана илсе паман.

31489 чуб
Чувашская Республиканская БИБЛИОТЕКА им. М. Горького

Мăшăр шăнкăрч килсе ларчĕ
Пирĕн пӳрт çине.
Савăнса çеç юрра ячĕ,
Çапрĕ çунатне.
Йышăнаççĕ, вырнаçаççĕ
Çĕнĕ йăвана.
Шăхăраççĕ, йыхăраççĕ
Урама мана.

Юрласа-ши кăтартасшăн
Аякри çинчен?
Тен, пире салам каласшăн
Кăнтăр çĕрĕнчен?

Пулăра

Ĕненместĕр-и? Хам куртăм —
Уйăх ӳкнĕ Кĕтнене.
Çăткăн чĕрчунсем те пур-тăр —
Çыртса илнĕ çуррине.

Аттене калатăп: «Уйăх...
Уйăх юнĕ шыв çинче!»
— Ан шавла,— юнать вăл,— çуйăн
Вăлтĕ каç тĕттĕмĕнче.

Аттене чышатăп: «Сулă,
Ай, таптать, ав, уйăха!..»
Малалла мĕн пулчĕ пулĕ? —
Çĕнеймерĕм ыйăха.

Тук, тук, тук!
Тук, тук, тук!
Иртенпех шаккать Петюк.
Каскалать те çапкалать—
Çĕнĕ пӳрт ӳссе ларать.

Тук, тук, тук!
Тук, тук, тук!
Туклатать çеç мăлатук.
Ĕшенмесĕр ăсталать—
Çĕн гараж кирлĕ пулать.

Тук, тук, тук!
Тук, тук, тук!
Тăрмашать кăна Петюк.
Тук, тук, тук!
Пӳрнене
Çатлаттарчĕ мăлатук.

«У-у-у!—йĕрет Петюк,—
Ма усал эс, мăлатук?..»
Туклатмасть халь мăлатук,
Туклатмашкăн кăмăл çук.

«Эс мана тытма вĕрен—
Кун пек пулмĕ ӳлĕмрен!..»
Тук, тук, тук!
Тук, тук, тук!
Ĕç пуçлать каллех Петюк.

ПĔЧĔК ХУДОЖНИК

Килĕшеççĕ Игоре
Тĕслĕрен кăранташсем.
Тимлесех вăл ӳкерет
Машинсем те гаражсем.

Вĕçренех амăш патне
Тĕпеле чупса пырать.
Хуçăлнă кăранташне
Лешĕ вĕçлетсе парать.

— Мĕн ӳкертĕн?
— Кур, анне.
— Лайăх, лайăх. Пултаран.
— Сăрлайман-ха кузовне
Кăранташ хуçăлнăран.

Тытса юрат

— Пукане валли çĕлерĕм
Çĕн саппун. Аннеçĕм, кур!
Аркине те эрешлерĕм.
— Пултаратăн. Пит маттур!

— Кив теттесене юсарăм.
Халь упан та пуçĕ пур.
Мулкача çуса тасатрăм.
— Пултаратăн. Пит маттур!

— Урайне те, кур-ха, çурăм,
Астуса ут, ан хурат.
— Пултаратăн эс, маттурăм!
— Маттур мар...
Тытса юрат...

суя паттăр

— Ванюксен йытти усал,
Çăмламас та хураскер.
Ӳрампа пырап утса —
Мана хирĕç çакăскер...

Хăрамарăм. Пуç ухса
Хыттăн кăшкăртăм. Унтан...
— Чăнласах-и?
— Чăнласах!
— Тармалла эпир пулсан.

— Эп тармарăм. Хӳринчен
Ярса тытрăм та тăрук
Кăшкăртрăм вара темччен.
— Тыттармастăн-и?
— Çук, çук!

— Эсĕ мар-и пĕркунне
Хытă тарнăччĕ хуртан?
— Хӳрине тытма унне
Майлă мар. Тата унтан...

ДЛЯ ДОШКОЛЬНОГО ВОЗРАСТА

25 пус

Денис Викторович Гордеев

ПЕТЮК И МОЛОТОК

Стихи

На чувашском языке

Редактор
А. А. Васильева

Художник
Ю. М. Никифоров

Художественный редактор
Г. С. Самсонова

Технический редактор
Н. В. Васильева

Корректор
Л. А. Иванова

ИБ 2253

Сдано в набор 20.01.89. Подписано к печати 20.04.89. Формат 70×108 1/16. Бумага офсетная. Гарнитура литературная. Печать офсетная. Усл. печ. л. 2,45. Усл. кр.-отт. 9,80. Учетно-изд. л. 2,68. Тираж 9000 экз. Заказ № 256. Изд. № 82. Цена 25 коп. Чувашское книжное издательство, 428000, Чебоксары, пр. Ленина, 4. Типография № 1 Государственного комитета Чувашской АССР по делам издательств, полиграфии и книжной торговли, 428019, Чебоксары, пр. Ивана Яковлева, 15.